Рег. № 67.
VI-3ЫК28




# ГОСУДАРСТВО ÇИНЧЕН

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ Э-Р ... ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палаты
21 мая 1941 г.
№ 67

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

В. И. ЛЕНИН

# ГОСУДАРСТВО ÇИНЧЕН

1919 ç. ИЮЛĔН 11-мĕшĕнче СВЕРДЛОВ
ЯЧĔПЕ ТАРАКАН УНИВЕРСИТЕТРА
ВУЛАНĂ ЛЕКЦИ

★

*Вырăсларан Н. И. Колюшкин куçарнă.*

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

Юлташсем, сирĕн кунта йышăннă план тăрăх, ун çинчен мана та пĕлтерчĕç, пирĕн паянхи калаçу вăл—государство çинчен пулать. Эсир çав ыйтăва ĕнтĕ мĕн таран пĕлни мана паллă мар. Эпĕ йăнăшмастăп пулсан, сирĕн курс халĕ анчах уçăлнă, çавăнпа та сирĕн вăл ыйтăва малтанхи хут йĕркеллĕн вĕренме тытăнмалла пулать. Апла пулсан, тен, çак йывăр ыйту çинчен итлекенсемшĕн нумайĕшĕсемшĕн пĕрремĕш лекцире эпĕ çителĕклĕ уççăнах тата ăнланмаллах каласа кăтартма пултараймăп. Вăл çапла пулас пулсан та вара эпĕ сире çакна сĕнетĕп: ун пирки эсир ан хăрăр, мĕншĕн тесен государство ыйтăвĕ чи пысăк, чи йывăр ыйтусенчен пĕри тата буржуази ученăйĕсем, писателĕсем, философĕсем пуринчен те ытларах пăтраштарнă ыйту пулса тăрать. Çавăнпа та кĕске калаçурах, пĕрремĕш хут калаçнипех, ку ыйтăва пĕтĕмпе ăнланса илессе нихăçан та кĕтме çук. Çавăн çинчен пĕрремĕш калаçу пулнă хыççăн хăвăршăн ăнланмалла мар, е уçăмлах мар вырăнсене палăртса хăвармалла, вĕсем патне иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш хут та тавăрăнма, ăнланмасăр юлнине малалла, кайран, вуласа та, уйрăм лекцисемпе калаçусенче те ăнланса, тĕпчесе пĕлме тата вĕсен çумне çĕнĕрен хушма май пултăр тесе, палăртса хăвармалла. Пирĕн тата тепĕр хут пухăнма май пулĕ тесе шанатăп эпĕ, ун чухне вара ытти мĕнпур ыйтусем тăрăх та пĕр-пĕрин шухăшĕсене пĕлме, пуринчен ытларах ăнланмасăр юлнă ыйтусене тĕрĕслеме май пулĕ тесе шанатăп. Çавăн пекех калаçусемпе лекцисемсĕр пуçне эсир тата Маркспа Энгельсăн чи тĕп произведенийĕсенчен хăшне те пулин вулама вăхăт тупăр тесе шанатăп эпĕ. Иккĕленмелли те çук, мĕнле литература вуламаллине кăтартса панинче тата советпа парти шкулĕнче вĕренекенсем усă куракан библиотекă-

сенчи кĕнекесем хушшинче—библиотеки сирĕн пур ĕнтĕ,— эсир, паллах, çав тĕп произведенисене тупăр,—чăн та, тен, хăшне-пĕрне каллех йывăр чĕлхепе çырни хăратса та ÿкерĕ, анчах каллех асăрхаттарас пулать: ун пирки хăрамалла мар, малтанхи хут вуланă чух ăнланмалла марри тепĕр хут вуланă чухне, е эсир ыйту патне кăшт тепĕр енчен пырсан, ăна ăнланмалла пулать, мĕншĕн тесен, тата тепĕр хут калатăп, çав ыйту пит те пысăк тата ăна буржуази ученăйĕсемпе писателĕсем çавтери пăтраштарса пĕтерне, çавăнпа вара тĕплĕн шухăшласа хăйтĕллĕн ăнланас текен кашни çыннăнах, çав ыйту патне темиçе хут та пымалла, каллех те каллех таврăнмалла, уççăн та çирĕп ăнланас тесе ыйтăва пур енчен те шухăшласа пăхмалла. Сирĕн вара çав ыйту патне таварăнма çакăн пирки те çăмăл пулĕ: мĕншĕн тесен çав ыйту вăл пĕтĕм политикăн чи тĕп, чи никĕсре тăракан ыйтăвĕ пулса тăрать, эсир ĕнтĕ, эпир халь пурăнса ирттерекен вăхăтри пек, тăвăллă, революциллĕ вăхăтсенче анчах мар, чи мирлĕ вăхăтсенче те кирек мĕнле экономикăллă е политикăллă ыйту пирки те, кирек мĕнле хаçатра та: мĕн вăл государство, унăн тупсăмĕ мĕнре, унăн пĕлтерĕшĕ мĕнре тата пирĕн партин, капитализма сирпĕтсе антарассишĕн кĕрешекен партин, коммунистсен партин, отношенийĕ епле, государство çине вăл мĕнле пăхать текен ыйтупа тĕлпулăр,—çав ыйтусем патне эсир, ку е вăл сăлтавпа кашни кунах таврăнăр. Чи кирли вара, эсир хăвăр вуланинчен, государство çинчен пулнă калаçусемпе лекцисенчен çав ыйтăва хăвăр тĕллĕн пĕлме вĕренесси пулать, мĕншĕн тесен çав ыйту питех те тĕрлĕ сăлтавсене пула, кашни уйрăм вак ыйту тăрăх, пачах кĕтмен çĕртен, противникпа калаçнă тата тавлашнă чух тĕлпулĕ. Çавăн чухне çеç, эсир çав ыйтăва хăвăр тĕллĕн ăнланма вĕренсен çеç,—çавăн чухне çеç вара эсир хăвăрăн шухăшăрсем çителĕклĕ çирĕп тесе шутлама тата çав шухăшсене е кирек кам умĕнче те, кирек хăш вăхăтра та ăнăçлăн хÿтĕлеме пултарăр.

Çак пысăк мар асăрхаттарусем хыççăн эпĕ çав ыйту патне: мĕн вăл государство, вăл мĕнле пуçланнă тата рабочи класс партийĕн, капитализма тĕппипех сирпĕтсе антарассишĕн кĕрешекен партин, коммунистсен партин, тĕпрен илсен, государство патне мĕнле отношени пулмалла, текен ыйту патне куçăп.

Эпĕ каларăм ĕнтĕ, государство çинчен тăракан ыйту

пек пăтраштарнă ыйту, буржуаллă наука, философи, юриспруденци, политикăллă экономи, публицистика представителĕсем юриех тата юриех те мар пăтраштарнă пек ыйту, урăх çук та пулĕ, терĕм. Çав ыйтăва халĕ те-ха час-часах тĕн ыйтăвĕсемпе пăтраштараççĕ, час-часах тĕн вĕрентĕвĕн представителĕсем кăна мар (вĕсенчен ăна, паллах кĕтме пулать), тата, хăйсене тĕн тĕшмĕшлĕхĕсенчен ирĕклĕ тесе шутлакан çынсем те, государство çинчен тăракан хăйне уйрăм ыйтăва тĕн ыйтăвĕсемпе пăтраштараççĕ те, государство вăл темле турă тунă, темле хăватпа пулнă япала тесе калакан вĕрентӳ тума,—час-часах пит те пысăк, идейăллă философиллĕ илсе никĕсленĕ вĕрентӳ,—тума хăтланаççĕ. Вĕсем государство вăл темĕскерле вăй, унпа этемлĕх пурăннă тата çынсене этемрен килмен, этеме тулашран килекен япала парса тăракан е пама пултаракан, хăйпе пĕрле илсе килекен вăй—çав вăй вăл, турăран пулнă вăй текен вĕрентӳ тума хăтланаççĕ. Калас пулать, çав вĕрентӳ эксплоататорла классен—помещиксемпе капиталистсен—интересĕсемпе çавтери тачă çыхăннă,—вĕсен интересĕсемшĕн çавтери кирлĕ, буржуаллă представитель господасен пĕтĕм хăнăхăвĕсене, шухăшĕсене, наукине çавтери тарăн сăрхăнса кĕнĕ, çавăнпа вара эсир ун юлашкийĕсене кашни утăмрах тĕлпулма пултаратăр, меньшевиксемпе эсерсем, хăйсем тĕн тĕшмĕшлĕхĕсене пăхăнса тăнă шухăша тарăхсах йышăнманскерсем, государство çине тĕрĕс пăхма пултаратпăр тесе ĕненекенскерсем, государство çине мĕнле пăхнине çитиех тĕлпулма пултаратăр. Вăл ыйтăва ак çакăн пирки питех те пăтраштарнă, йывăрлатнă: çак ыйту (вăл çав тĕлĕшпе экономикăллă наукăсен никĕсĕсенчен çеç каярах тăрса) пуçпулса тăракан классен интересне ытти кирек мĕнле ыйтуран та ытларах пырса тивет. Государство çинчен вĕрентни обществăри привилегисене тӳрре кăларма, эксплуатаци пуррине тӳрре кăларма, капитализм пуррине тӳрре кăларма кирлĕ,—акă мĕншĕн çав ыйтура никам майлă та мар пулассине кĕтни, çав ыйтăва наука кăтартнă пек çутатма хăтланакан çынсем сире таса наука шухăшне кăтартса парĕç тесе шутлани,—вăл питех те пысăк йăнăш. Государство ыйтăвĕнче, государство çинчен вĕрентнинче, государство çинчен калакан теорире эсир яланах, çав ыйтупа паллашса, ăна çителĕклĕ ăнлансан, эсир яланах тĕрлĕ классем пĕр-пĕринпе кĕрешнине

курăр, çав кĕрешӳ государство çине мĕнле пăхнинче, государствăн ролĕпе пĕлтерĕшне хакланинче палăрса тăрать е курăнса тăрать.

Çак ыйтăва наука кăтартнă пек лайăххрах çутатса парас тесен, государство мĕнле пуçланса кайнине тата вăл мĕнле аталаннине истори енчен илсе, кĕскен те пулин, пăхса тухас пулать. Çав ыйтăва тĕрĕс ăнланма хăнăху чăнах та туянас тесен, йышлă вак-тĕвексем хушшинче е пĕр-пĕринпе кĕрешекен пит те нумай тĕрлĕрен шухăшсем хушшинче çухалса каяс мар тесен, обществăллă наука ыйтăвĕнче чи шанчăкли тата чи кирли,—çав ыйтăва наука кăтартнă пек ăнланас тесен, чи кирли вăл çакă пулса тăрать: историллĕ тĕп çыхăнăва манмалла мар, кашни ыйтăва çак паллă явлени историре мĕнле пуçланса кайни енчен, çав явлени хăйĕн аталанăвĕнче мĕнле тĕп тапхăрсем урлă иртни енчен пăхас пулать, унăн çав аталанăвĕ енчен пăхсан вара, вăл япала халĕ мĕн пулса тăнине пăхас пулать.

Государство ыйтăвĕ тĕлĕшĕпе эсир Энгельсăн „Происхождение семьи, частной собственности и государства“ ятлă сочиненийĕпе паллашасса шанатăп эпĕ. Вăл—кучуххехи социализмăн тĕп сочиненийĕсенчен пĕри пулса тăрать, унта кашни сăмахнех шанма пулать, кашни сăмахнех пуç тавра шухăшласа калана, пит те нумай историллĕ тата политикăллă материала никĕсе хурса çырнă. Иккĕленмелли те çук, çав сочиненире пур пайсене те пĕр пек çăмăл, ăнланмалла çырнă тесе калама çук: хăш-пĕр пайĕсене ăнланас тесен, вулаканăн ĕнтĕ истори тата экономика тĕлĕшпе паллă пĕлӳсем пулни кирлĕ. Анчах каллех калатăп: çав произведение вуласа тухнă хыççăнах ăнланса илменнинчен хăраса ӳкмелле мар. Пĕр çын та ĕнтĕ—вуласа тухнă хыççăнах, ăнланса илме пултараймасть. Анчах, интересленсе, ун патне кайран каялла таврăнсан, вара эсир çав сочинение, пĕтĕмĕшпех мар пулсан та, унăн чылай ытларах пайĕсене ăнланма пултаратăр. Çав кĕнеке çинчен эпĕ государство ыйтуне вăл тĕрĕс ăнлантарса панă пирки асăнатăп. Вăл государство мĕнле пулса кайни çинчен çырнă историллĕ очеркран пуçланать.

Çав ыйтăва тĕрĕс çутатса парас тесен, ытти ыйтусем пекех, сăмахран, капитализм пуçланса кайни çинчен, çынсем хушшинче эксплуатаци пуçланса кайни çинчен, со-

циализм ҫинчен, социализм мӗнле пулса кайни, ӑна мӗнле условисем ҫуратни ҫинчен,—мӗнпур ҫавӑн пек ыйтусене те тӗплӗн, шанчӑклӑн ҫутатса пама, вӗсем пӗтӗмӗшпе мӗнле аталаннине истори енчен пӑхсан ҫеҫ, май пулать. Ҫав ыйту тӗлӗшпе чи малтан государство яланах мар пулнине асра тытмалла. Государство пулман вӑхӑт та пулнӑ. Ӑҫта тата хӑҫан общество классем ҫине пайланасси пулса тӑрать, эксплуататорсемпе эксплуатациленекенсем пулса тӑраҫҫӗ, вӑл ҫавӑнта тата ҫавӑн чухне пулса тӑрать.

Ҫынна ҫын эксплуатацилессин пӗрремӗш форми, классем ҫине—чурасемпе чурахуҫисем ҫине—пайланассин пӗрремӗш форми пуҫланса кайиччен,—ҫакӑнччен малтан патриархальнӑй, е—ӑна тепӗр чух каланӑ пек—клановӑй (клан—ӑру, йӑх, ҫынсем ун чух ӑрӑвӗ-ӑрӑвӗпе, йӑхӗ-йӑхӗпе пурӑннӑ) ҫемье пулнӑ, ҫав авалхи вӑхӑтсен йӗрӗсем авалхи нумай халӑхсен йӑлисенче ҫителӗклӗ таранах палӑрса юлнӑ, эсир вара авалхи культура ҫинчен ҫырнӑ кирек хӑш сочинение илсен те, авалхи коммунизм майлӑрах вӑхӑт, общество чурахуҫисемпе чурасем ҫине пайланса тӑман вӑхӑт пулнине ку е вӑл таран уҫҫӑн ҫырса панисене, кӑтартса панисене, асаилӳсене яланах тӗлпулӑр. Ун чухне государство пулман, вӑйпа ирӗксӗрлес йӗркепе пӗрмаях усӑ курмалли тата ҫынсене вӑйпа ирӗксӗрлесе пӑхӑнтармалли уйрӑм аппарат пулман. Ҫавӑн пек аппарата государство теҫҫӗ те.

Авалхи обществӑра, ҫынсем хӑйсен аталанӑвӗн чи кӗҫӗн пусӑмӗнче, тискер кайӑксем евӗрлех пулса, пӗчӗк йӑхсемпе пурӑннӑ чухне, хальхи цивилизациллӗ этемлӗхе темиҫе пин ҫулсем хушши уйӑрса тӑракан эпохӑра,—сав вӑхӑтра государство пулнин паллисем курӑнмаҫҫӗ-ха. Йӑласем, авторитет, хисеплесси, старейшинӑсем усӑ курнӑ власть пуҫпулса тӑнине куратпӑр эпир, ҫав власть хӑш чухне хӗрарӑм аллинче тӑнине куратпӑр,—ун чухне хӗрарӑм хальхи пек пусмӑрта, правасӑр пулман,—анчах та ыттисене пӑхӑнтарса тытса тӑракан уйрӑм ҫынсем пулнине, пӑхӑнтарса тытса тӑрас интересшӗн, тӗллевшӗн пӗрмаях, яланах ирӗксӗрлемелли паллӑ аппарат, вӑйпа хӗсӗрлемелли аппарат тытса тӑрасси пулнине ниҫта та курмастпӑр. Ун пек аппарат хальхи вӑхӑтра, эсир пурте пӗлетӗр, войскӑсен хӗҫпӑшаллӑ отрячӗсем, тӗрмесем тата ҫынна ирӗксӗрлемелли ытти хатӗрсем пулса тӑраҫҫӗ,—вӗсем ӗнтӗ государствӑн ӑшчикӗ пулаҫҫӗ.

Çав тĕн вĕрентĕвĕ тенĕскерсенчен, ултавсенчен, философиллĕ теорисенчен, çав буржуази ученăйĕсем тунă тĕрлĕ шухăшсенчен пăрăнса, ĕçĕн чăн-чăн тупсăмне шыраса пăхсан, вара государство шăпах ĕнтĕ, этем обществинчен çавăн пек уйăрăлса тухса пулнă управленин аппарачĕ иккенне куратпăр. Çынсен çавăн пек, пăхăнтарса тытса тăрас тĕлĕшпе çеç ĕçлекен уйрăм группи пулса тăрсан, ăна тытса тăма вара хĕсĕрлекен уйрăм аппарат, ыттисене ирĕксĕрлесе пăхăнтаракан аппарат—тĕрмесем, çынсен уйрăм отрячĕсем, войско т. ыт. кирлĕ пулаççĕ,—çавăн чухне государство пуçланса каять.

Анчах государство пулман вăхăт та пулнă, ун чухне пĕтĕмĕшле çыхăну, общество хăй те, дисциплина, ĕçе йĕркелесси хăнăху вăйне пула, йăласене пула, старейшинăсем е хĕрарăмсем усă курнă авторитета тата хисеплĕхе пула тытăнса тăнă,—вăл вăхăтра хĕрарăмсем арçынпа пĕртан праваллă кăна мар, тата час-часах ытларах праваллă вырăн та йышăнса тăнă,—ун чухне уйрăм йышши çынсем—государствăна тытса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен специалистсем пулман. Истори çакна кăтартса парать: ăçта тата хăçан общество классем çине пайланасси—апла пулсан, пĕрисем теприсен ĕçĕпе яланах усă курма пултаракан, пĕри теприне эксплуатацилекен группăсем çине пайланасси—пуçланса кайнă, çавăнта тата çавăн чухне çеç çынсене хĕсĕрлемелли уйрăм аппарат пулса тăракан государство пуçланса кайнă.

Историре общество классем çине çавăн пек пайланса тăни, тĕпре тăракан факт пулса, пирĕн умра яланах уççăн палăрса тăмалла. Этем обществисем пурте пиншер çул хушши мĕнпур çĕршывсенче аталанни пире çав аталану—вăл пĕтĕмĕшлĕ закон тивĕçĕпе, тĕрĕс, йĕрки-йĕркипе çакăн пек пулса пынине кăтартса парать: малтанхи вăхăтра классемсĕр общество,—чи пирвайхи патриархальнăй общество, авалхи общество, аристократисемсĕр общество пулнă; унтан—чуралăх çинче тытăнса тăракан общество, чуралăх обществи. Çак общество витĕр кучухнехи пĕтĕм цивилизациллĕ Европа тухнă—чуралăх 2 пин çул ĕлĕкрех пĕтĕмĕшпех пуçпулса тăнă. Ун витĕр тĕнчен ытти пайĕнчи халăхсен пит нумай ытларахăшĕ те тухнă. Сахалтарах аталаннă халăхсен чуралăх паллисем халĕ те пур, чуралăхăн тытăмĕсене, тĕслĕхрен, Африкăра эсир халĕ те тупма пултаратăр. Чурахуçисемпе чурасем—

классем çине чи пирвайхи хут пысăккăн пайланни пулса тăрать. Пĕрремĕш группа хăй аллинче производство хатĕрĕсене—çĕре, ĕçхатĕрĕсене (вĕсем ун чух пит те начар пулин те) тытса тăнă çеç мар, вăл тата çынсене те хăй аллинче тытса тăнă. Çав группăна чурахуçисем тенĕ, теприсене, ĕçлекенсене, хăй ĕçне ыттисене паракансене—чурасем тенĕ.

Çав форма хыççăн историре тепĕр форма пулнă—крепостной право. Чуралăх пит те нумай çĕршывсенче хăйĕн аталанăвĕнче крепостной право пулса тăнă. Обществăн пайланăвĕ—крепостник-помещиксем тата крепостной хресченсем. Çынсем хушшинчи отношенисен форми улшăннă. Чурахуçисем чурасене хăйсен харпăрлăхĕ вырăнне шутланă, закон çав шухăша çирĕплетнĕ тата чурасем çине пĕтĕмĕшпех чурахуçисен аллинчи япала çине пăхнă пек пăхнă. Крепостной хресчен тĕлĕшĕпе вĕсене класла пусмăрлассине, пăхăнтарса тăрасси юлнă, анчах крепостник-помещик хресчене япала вырăнне тытса тăракан хуçа тесе шутламан, унăн хресчене ĕçлеттерме тата ăна хăшпĕр повинноçсене тутармашкăн ирĕксĕрлеме çеç право пулнă. Чăннипе илсен, эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, крепостной право, уйрăмăнах Российăра, унта вăл ытла та нумай вăхăт хушши тытăнса тăнă тата чи ирсĕр формăсем йышăннă, чуралăхран нимĕнпе те уйрăм пулман.

Малалла,—крепостной обществăра, суту-илӳ аталаннă май, пĕтĕм тĕнчери рынок пуçланса кайнă май, укçатенкĕ çаврăнăшĕ аталаннă май, çĕнĕ класс—капиталистсен класĕ пулса тăнă. Таврартан, таварсене улăштарнинчен, укçа-тенкĕ влаçĕ пуçланса кайнинчен капитал влаçĕ пуçланса кайнă. XVIII-мĕш ĕмĕр тăршшĕнче, тĕрĕсрех—XVIII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа, тата XIX-мĕш ĕмĕр тăршшĕнче революцисем пĕтĕм тĕнчипех пулса иртнĕ. Крепостничествăна Хĕвеланăç Европăри пур çĕршывсенчен те хĕссе кăларнă. Вăл чи кайран Российăра пулса иртнĕ. 1861-мĕш çулта Российăра та переворот пулнă, ун хыççăн обществăн пĕр форми вырăнне тепри—крепостничество вырăнне капитализм пулса тăнă. Çапла улшăннă чух классем çине пайланасси юлнă, крепостной правăн тĕрлĕ юлашкийĕсемпе паллисем юлнă, анчах пĕтĕмĕшпе илсен классем çине пайланасси урăхла форма йышăннă.

Капитал хуçисем, çĕр хуçисем, фабрикăсемпе заводсен

хуҫисем пур капитализмлӑ государствӑсенче те халӑхӑн пит те сахал пайӗ ҫеҫ пулнӑ, пулаҫҫӗ те. Вӗсем халӑхӑн пӗтӗм ӗҫне хӑйсен аллинче тытса тӑраҫҫӗ, ҫапла вара, ӗҫҫыннисен пӗтӗм массине хӑйсен аллинче, пусмӑрласа, эксплуатацилесе тытса тӑраҫҫӗ. Ӗҫҫыннисенчен нумайӗшӗ пролетарисем, тара кӗрӗшнӗ рабочисем пулса тӑраҫҫӗ. Хӑйсене пурӑнма кирлӗ япаласене вӗсем производство процесӗнче хӑйсен ӗҫ аллисене, хӑйсен ӗҫ вӑйне сутнипе ҫеҫ илсе тӑраҫҫӗ. Крепостной вӑхӑтрах сапаланса тата пусмӑр тӳссе пурӑннӑ хресченсем ӗнтӗ, капитализма куҫнӑ май, хӑшӗсем (ытларахӑшӗ) пролетарисем пулса кайнӑ, хӑшӗсем (сахалтарахӑшӗ) пуян хресченсем, хӑйсем те рабочисене тара тытакан ялти буржуази пулса тӑнӑ.

Ҫак тӗп факта—общество чуралӑхӑн авалхи формисенчен крепостничествӑна тата, юлашкинчен, капитализма куҫнине—сирӗн яланах асра тытмалла, мӗншӗн тесен, ҫак тӗп факта аса илсен ҫеҫ, ҫак тӗп рамка ӑшне мӗнпур политикӑллӑ вӗрентӳсене кӗртсе лартсан ҫеҫ, эсир ҫак вӗрентӳсене тӗрӗс хак пама тата вӗсем мӗн ҫинчен вӗрентнине пӗлме пултарӑр, мӗншӗн тесен этем историйӗн ҫав пысӑк тапхӑрӗсенчен кашниех—чуралӑх, крепостничество, капитализм тапхӑрӗ—вуншар, ҫӗршер ӗмӗр тӑрӑшшӗне ҫавӑрса илет; унта политикӑллӑ формӑсем, тӗрлӗрен политикӑллӑ вӗрентӳсем, шухӑшсем, революцисем питех те нумай, ҫавӑнпа та ҫав мӗнпур нумай тӗрлӗ ула-чӑлалӑхра, тата ҫавтери пысӑк тӗрлӗ-тӗслӗхре—уйрӑмӑнах буржуаллӑ ученӑйсемпе политиксен политикӑллӑ, философиллӗ т. ыт. вӗрентӗвӗсемпе ҫыхӑннӑскерсенче, ҫав тӗп ҫулйӗре, общество классем ҫине ҫапла пайланнине, классем пуҫпулса тӑрас форма ҫапла улшӑннине асра ҫирӗп тытса, ҫак енчен пӗтӗм обществӑллӑ ыйтусене, экономикӑллӑ, политикӑллӑ, духовнӑй, тӗн т. ыт. ыйтусене пӑхса тухсан ҫеҫ, ӑнланса илме пулать.

Государство ҫине эсир ҫапла тӗпрен пайланни енчен пӑхсан, общество классем ҫине пайланиччен, эпӗ ун ҫинчен каларӑм ӗнтӗ, государство та пулманнине курӑр. Анчах общество классем ҫине пайланасси пуҫланса ҫирӗпленсе пынӑ май, класлӑ общество пуҫланса кайнӑ май, ҫавна май государство та пуҫланса кайса ҫирӗпленет. Этемлӗх историнче чуралӑх, крепостничество, капитализм тапхӑрӗсене пурӑнса иртнернӗ, ҫавсене халӗ те пурӑнса

ирттерекен çĕршывсем вуншар та çĕршер пур. Вĕсенче кашнийĕнчех, пит те пысăк историллĕ улшăнусем пулнă пулин те, этемлĕх аталанăвĕпе, чуралăхран крепостничество урлă капитализм патне куçассипе тата хальхи пĕтĕм тĕнчипех капитализма хирĕç кĕрешесси патне куçассипе çыхăнса тăнă мĕнпур политикăллă улшăнусем, мĕнпур революцисем пулнă пулин те,—эсир государство пуçланса кайнине яланах куратăр. Вăл яланах обществăран уйăрăлса тухнă пĕр-паллă аппарат пулнă, вăл аппарат тытса тăрас тĕлĕшпе çеç, е тытса тăрас тĕлĕшпе çеç пекех е пуринчен ытла тытса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен çынсен группинчен пулса тăнă. Çынсем пăхăнса тăракансем тата пăхăнтарса тăракан специалистсем çине пайланаççĕ, общество çийĕнче, çӳлте тăракансем çине пайланаççĕ, вара вĕсене правительсем, государство представителĕсем, теççĕ. Çав аппарат, ыттисене тытса тăракан çынсен çав группи, вăйпа ирĕксĕрлемелли аппарата, физически вăй аппаратне яланах хăйĕн аллине тытса илет; çынсене çапла вăйпа ирĕксĕрлесси авалхи чукмарпа пулать-и, е чуралăх эпохинче—нумаях лайăхлатнă хĕçпăшалсемпе, е вăтам ĕмĕрте шутласа кăларнă пăшалсемпе, е, юлашкинчен, кучухнехи хĕçпăшалсемпе, XX-мĕш ĕмĕрте техника тĕлĕшпе тĕлĕнмелле ӳсĕмсем тунă тата пĕтĕмĕшпех кучухнехи техникăн ӳсĕмĕсем çинче тытăнса тăракан хĕçпăшалсемпе пулать-и,—вăл пурпĕрех. Вăйпа ирĕксĕрлессин меслечĕсем улшăнса пынă, анчах государство пур чухне яланах, кашни обществăрах пăхăнтарса тăракан, хушса тăракан, пуçпулса тăракан çынсен группи пулнă, вĕсем влаçа тытса тăмашкăн хăйсен аллинче вăйпа ирĕксĕрлемелли аппарат, е хĕсĕрлемелли аппарат, техника тĕлĕшĕнчен хăй эпохине тивĕçлĕ хĕçпăшалланнă аппарат пулнă. Вара çав пĕтĕмĕшлĕ явленисем çине тинкеререх пăхсан, классем пулман чухне, эксплуатацилекенсемпе эксплуатациленекенсем пулман чухне, мĕншĕн государство пулман, тата классем пуçланса кайсан, вăл мăншĕн пуçланса кайнă тесе ыйтсан çеç,—эпир государство ăшчиккипе пĕлтерĕшĕ çинчен тăракан ыйту çине татăклă ответ тупатпăр.

Государство—вăл пĕр класс тепĕр класс тĕлĕшпе пуçпулса тăрас йĕркене тытса тăмалли машина. Обществăра классем пулман чухне, чуралăх эпохиччен çынсем авал пулнă пысăк пĕртанлăх условийĕсенче, ĕç тухăçлăхĕ питĕ начар пулнă условисенче ĕçлесе пурăннă чухне,

авалхи çын хăйне пурăнма кирлĕ чи начар япаласене те аран-аран тупкаланă чухне пăхăнтарса тытса тăма ятарласах уйăрнă çынсен группи, пĕтĕм общество çийĕнче пуçпулса тăракан çынсен уйрăм группи пуçланса кайман тата пуçланса кайма та пултарайман. Общество классем çине пайланнин пĕрремĕш форми пулса тăрсан çеç, чуралăх пуçланса кайсан çеç, пĕр-паллă класс çыннисен, çĕр ĕçĕн чи çăмăл формисемпе тăрăшса ĕçлесе, хăшпĕр таран ытлашши продукт тума май пулсан çеç, çав ытлашши продукт чуранăн питех те чухăн пурнăçне валли ытлах кирлĕ мар пулса, чурахуçи аллине лекме пуçласан, çапла вара, çак чурахуçисен класĕн пурнăçĕ çирĕпленсен, тата ăна çирĕплетмешкĕн государство пулса тăрасси кирлĕ пулнă.

Вăл вара пулса тăнă та, —чуралăх государстви—чурахуçисен аллине власть паракан, пĕтĕм чурасене пăхăнтарса тытса тăма май паракан аппарат пулса тăнă. Общество та, государство та ун чухне хальхинчен чылай вак пулнă, вĕсен çыхăну аппарачĕ хальхипе танлаштарма çук начар пулнă—ун чухне хальхи пек çыхăну хатĕрĕсем пулман. Тусем, юханшывсем, тинĕссем хальхипе танлаштарсан калама çук пысăк чăрмав пулса тăнă, çавăнпа государство пулса каясси чылай ансăр географилĕ чикĕсем хушшинче пула-пула пынă. Государствăн техника тĕлĕшĕнчен начар аппарачĕ государство ĕçне туса тăнă, государство чиккисем чылай çывăхра пулнă, ĕçĕсем сахал пулнă. Анчах çапах та чурасене чуралăхра пулса юлма вăйпа ирĕксĕрлекен аппарат пулнă, вăл обществăн пĕр пайне тепĕр пайне пăхăнтарса, пусмăрласа тытса тăнă. Обществăн ытларахăш пулса тăракан пĕр пайне тепĕр пайĕшĕн пĕрмаях ĕçлеттерме вăйпа ирĕксĕрлекен яланхи аппаратсăр май çук. Классем пулман чухне—çав аппарат та пулман. Классем пуçланса кайсан, классем çине пайланасси ӳснипе, çирĕпленнипе пĕрле пур çĕрте те тата яланах уйрăм институт—государство пуçланса кайнă. Государство формисем питех те тĕрлĕрен пулнă. Чуралăх вăхăчĕсенче, ун чухнехипе шутласан чи малта тăракан, чи культурăллă тата чи цивилизациллĕ государствăсенче, тĕслĕхрен, авалхи Грецилпе Римра, пĕтĕмĕшпех чуралăх çинче тытăнса тăнăскерсенче, эпир государствăн тĕрлĕ формисене куратпăр. Ун чухнех ĕнтĕ монархипе республика хушшинче, аристокра-

типе демократи хушшинче уйрӑмлӑх пуҫланса каять. Монархи—пӗр ҫын влаҫӗ, республика—суйласа лартмасӑр пулнӑ власть пӗртте ҫукки пулса тӑрать; аристократи—ытла пысӑках мар сахалрахӑшӗн влаҫӗ, демократи—халӑх влаҫӗ пулать (демократи вӑл—грексен чӗлхинчен тӳрех куҫарсан: халӑх влаҫӗ, тенине пӗлтерет). Ҫак мӗнпур уйрӑмлӑхсем чуралӑх эпохинче пуҫланса кайнӑ. Ҫавӑн пек уйрӑмлӑхсем пулин те чуралӑх эпохи вӑхӑтӗнчи государство—чуралӑх государстви пулнӑ, вӑл монархи пулнӑ-и е аристократиллӗ, е демократиллӗ республика пулнӑ-и,—ҫакӑ вӑл пурпӗрех.

Авалхи вӑхӑтсен историн курсӗнче пуринче те, ҫав предмет ҫинчен лекци итлесен, эсир монархиллӗ государствӑсемпе республикӑллӑ государствӑсем хушшинче кӗрешӳ пулни ҫинчен илтӗр, анчах тӗпре, никӗсре тӑраканни акӑ мӗн пулнӑ: чурасене ҫын вырӑнне шутламан; граждан вырӑнне шутламан кӑна та мар, ҫын вырӑнне те шутламан. Римри закон вӗсене япаласем вырӑнне хурса пӑхнӑ. Ҫынна вӗлернӗшӗн айӑплакан закон, ҫынна хӳтӗлекен ытти законсем ҫинчен каламасан та ёнтӗ, чурасем тӗлӗшпе пулман. Вӑл чурахуҫисене ҫеҫ, вӗсене пӗртен-пӗр тулли правальлӑ граждансем вырӑнне йышӑнса, хӳтӗленӗ. Анчах монархи туса хунӑ-и, вӑл—чуралӑх монархийӗ пулнӑ, е республика туса хунӑ-и, вӑл—чуралӑх республики пулнӑ. Вӗсенче мӗнпур правасемпе чурахуҫисем ҫеҫ усӑ курнӑ, чурасем вара закон тӑрӑх япала кӑна пулнӑ, вара вӗсене кирек епле ирӗксӗрлеме юранӑ кӑна мар, чурана вӗлернине те айӑплӑ ӗҫ вырӑнне шутламан. Чуралӑх республикисем хӑйсен шалти организацийӗпе уйрӑлса тӑнӑ: аристократиллӗ республикӑсем тата демократиллӗ республикӑсем пулнӑ. Аристократиллӗ республикӑра суйлава привилегиллӗ, сахал йышлӑ ҫынсем ҫеҫ хутшӑннӑ, демократиллӗ республикӑра—пурте хутшӑннӑ, анчах вӗсем пурте чурахуҫисем пулнӑ, чурасем пӗртте пулман. Ҫав тӗп обстоятельствӑна асра тытмалла, мӗншӗн тесен вӑл государство ыйтуне пуринчен ытларах ҫутатса парать тата государство ӑшчиккине уҫҫӑн кӑтартса парать.

Государство вӑл—пӗр класс тепӗр класа пусмӑрласа тӑмалли машина, пӑхӑнса тӑракан ытти классене пӗр класс вӑйпа ирӗксӗрлесе тӑма кирлӗ машина. Вӑл машинӑн форми тӗрлӗрен пулать. Чуралӑх государствинче

монархи, аристократиллĕ республика е тата демократиллĕ республика та пур. Ҫаннипе илсен управлени форми пит те тĕрлĕрен пулнă, анчах ĕҫĕн тупсăмĕ пĕрре ҫеҫ пулнă: чурасен нимĕнле право та пулман, пусмăрти класах пулса юлнă, вĕсене ҫын вырăнне шутламан. Крепостной государствăра та ҫавăн пек пулнинех куратпăр эпир.

Эксплуатаци форми улшăнни чуралăх государствине крепостной государство туса янă. Ку питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă. Чуралăх обществинче—чура пачах правасăр пулнă, ăна ҫын вырăнне те хуман; крепостной государствăра—хресчен ҫĕр ҫумне ҫыхăнса тăнă. Крепостной правăн тĕп палли ҫакă пулать: хресченсене (ун чухне хресченсем ытларах пулнă, хулари халăх пит те сахал пулнă) ҫĕр ҫумне ҫирĕплетсе хунă тесе шутланă,—ҫакăнтан вара крепостной право тенĕ ăнлав та пулса тăнă. Хресчен темиҫе кун хушши, ăна помещикпа-нă участок ҫинче хăйшĕн ĕҫленĕ, ытти кунсенче крепостной хресчен улпут валли ĕҫленĕ. Класлă обществăн ăшчикки юлнă: общество класла эксплуатаци ҫинче тытăнса тăнă. Тулли праваллă пулма помещиксем ҫеҫ пултарнă, хресченсем правасăр шутланнă. Ҫаннипе илсен вĕсен пурнăҫĕ чуралăх государствинчи чурасен пурнăҫĕнчен питех те сахал уйăрăлса тăнă. Анчах ҫапах та вĕсене ирĕке тухмашкăн, хресченсене ирĕке тухмашкăн чылай сарлакарах ҫул уҫăлнă, мĕншĕн тесен крепостной хресчен вăл помещикăн тÿррĕм харпăрлăхĕ пулать, тесе шутланман. Хресчен пĕр-пĕр вăхăт хушши хăй участокĕ ҫинче ĕҫлеме пултарнă, калас пулать, хăшпĕр таран хăйпе хăй хуҫа пулма пултарнă, вара улăшу, суту-илÿ ҫыхăнăвĕ валли аталанма майсем ытларах пулса тăрсан, крепостной право ытларах та ытларах саланса ишĕлсе пынă, хресченсене ирĕке тухмалли майсем ытларах та ытларах аслăланса пынă. Крепостной общество чуралăх обществинчен яланах пысăкрах пулнă. Унта суту-илÿ, промышленность аталанăвĕн элеменчĕсем нумай пулнă, ку вăл ун чухнехи вăхăтрах ĕнтĕ капитализм патне илсе пынă. Вăтам ĕмĕрсенче крепостной право пысăк вырăн йышăнса тăнă. Ун чухне те государство формисем тĕрлĕрен пулнă, ун чухне те монархи те, тата, сахал палăрса тăнă пулин те, республика та пулнă, анчах пуҫпулса тăракансем яланах помещиксем-крепостниксем ҫеҫ пулнă.

Крепостной хресченсене политикăллă право тавраше пачах паман.

Чуралăх вăхăтĕнче те, крепостной право вăхăтĕнче те пит сахал çынсем çавтери нумай çынсем тĕлĕшпе пуçпулса тăрасси вăйпа ирĕксĕрлемесĕр пулма пултараймасть. Пĕтĕм истори тăршшĕнче пусмăрти классем пусмăра пĕтерсе хума вĕçĕ-хĕррисĕр тăрăшса пăхни тем чухлех пулнă. Чуралăх историйĕнче чуралăхран хăтăлассишĕн темиçе вуншар çула тăсăлнă вăрçăсем пулнă. Сăмахран каласан, „спартаковецсем" тенĕ ята, халĕ Германире коммунистсем йышăннă ята, капитализм пусмăрне хирĕç чăннипе кĕрешекен пĕртен-пĕр парти йышăннă ята,—çак ята вĕсем акă мĕншĕн илнĕ: Спартак вăл чурасен икĕ пин çул ĕлĕкрех пулса иртнĕ чи пысăк восстанийĕсенчен пĕрин чи паллă геройĕсенчен пĕри пулнă. Пит те вăйлă пулнă пек туйăннă Рим империне, пĕтĕмĕшпех чуралăх çинче тытăнса тăнăскере, чурасен пит те вăйлă восстанийĕ темиçе çул хушши кисретнĕ, чĕтретнĕ; чурасем хĕçпăшалланса Спартак ертсе пынипе пит те пысăк çар тунă. Юлашкинчен вĕсене чурахуçисем çĕмĕрсе, тытса, вĕлерсе тата асаплантарса пĕтернĕ. Çав граждан вăрçисем каслă обществăн пĕтĕм историйĕ тăршшĕнче пулса пынă. Эпĕ халĕ чуралăх эпохинчи граждан вăрçисенчен чи вăйлă вăрçăн тĕслĕхне илсе кăтартрăм. Крепостной правăн пĕтĕм эпохинче хресченсен çавăн пекех восстанийĕсем яланах, темĕн чухлех пулнă. Германире, тĕслĕхрен, вăтам ĕмĕрсенче икĕ класс хушшинчи, помещиксемпе хресченсем хушшинчи кĕрешӳ сарăлса кайса, хресченсен помещиксене хирĕç пыракан граждан вăрçи пулса тăнă. Российăра та хресченсем помещик-крепостниксене хирĕç çакăн пек темиçе хут та восстани тунине эсир пурте пĕлетĕр.

Хăй пуçпулса тăрассине упраса хăварас, хăй влаçне сыхласа хăварас тесен, помещикĕн хăйĕн аллинче питех те нумай халăха пăхăнтарса тăракан аппарат, вĕсене паллă законсене, правилăсене пăхăнтарса тăракан аппарат кирлĕ пулнă,—çав мĕнпур законсен тĕп шухăшĕ—крепостной хресчен тĕлĕшпе помещик влаçне сыхласа хăварасси пулнă. Çакă вăл крепостной государство пулнă та ĕнтĕ, сăмахран, Российăра е Азири пачах кая юлнă çĕршывсенче, крепостной йĕрке халичченех пуçпулса тăракан çĕршывсенче,—формипе вăл пĕр-пĕринчен расна

пулнӑ—е республикӑллӑ, е монархиллӗ государство пулнӑ. Государство монархиллӗ пулнӑ вӑхӑтра—пӗрин влаçне çеç йышӑннӑ; государство республикӑллӑ пулнӑ вӑхӑтра—помещиксен обществинчен суйланӑ çынсем мӗн чухлӗ те пулин ӗçе хутшӑннине йышӑннӑ, ку вӑл—крепостной обществӑра пулнӑ. Крепостной обществӑра классем çакӑн пек пайланса тӑнӑ: халӑхӑн питех те нумай пайӗ—крепостной хресченсем,—пит те сахаллисене—çӗр тытса тӑракан помещиксене пӗтӗмпех пӑхӑнса тӑнӑ.

Суту-илӳ аталанни, таварсем сутса-илесси аталанни çӗнӗ класс—капиталистсен класӗ—çуралса тухасси патне илсе пынӑ. Капитал вӑтам ӗмӗрсен вӗçӗнче пуçпулса кайнӑ, Америкӑна тупса уçнӑ хыççӑн тӗнчери суту-илӳ питех те вӑйлӑн аталанса çитсен, хаклӑ металсен хисепӗ ӳссе кайсан, кӗмӗлпе ылттӑн улӑшу хатӗрӗ пулса тӑрсан, укçа-тенкӗ çаврӑнӑшӗ питех те пысӑк пуянлӑхсене пӗр алӑра тытса тӑма май парсан пуçланса кайнӑ. Кӗмӗлпе ылттӑн пӗтӗм тӗнчипех пуянлӑх вырӑнне шутланса тӑнӑ. Помещиксен класӗн экономикӑллӑ вӑйӗсем чакса пынӑ, вара çӗнӗ класс вӑйӗ—капитал представителӗсен вӑйӗ аталаннӑ. Обществӑна çӗнӗлле йӗркелесси çапла пулса пынӑ: пур граждансем те пӗртан пулмалла, ӗлӗкхи пек чурахуçисемпе чурасем çине пайланса тӑрасси пӑрахӑçа тухмалла, закон умӗнче пурте пӗртан шутланмалла, вӑл мӗнле капитал тытса тӑнине пӑхмасӑрах—уйрӑм харпӑрлӑх прави йӗркипе çӗр тытса тӑрать-и, е вӑл çап-çара чухӑн-и, унӑн ӗçлекен аллисем анчах пур,—закон умӗнче вӗсем пурте пӗртан пулмалла. Закон пурне те пӗр пек хӳтӗлет, харпӑрлӑха хӳтӗлет, камӑн харпӑрлӑх пур, ӑна хӳтӗлет, харпӑрлӑх çук пирки, хӑйсен аллисемсӗр пуçне урӑх нимӗн те çук пирки чухӑнланса, юхӑнса пролетарие тухса пыракан çынсем харпӑрлӑха хирӗç тапӑнасран хӳтӗлесе тӑрать. Çавӑн пек ӗнтӗ—капитализмлӑ общество.

Эпӗ вӑл общество çинче тӗплӗнех чарӑнса тӑма пултараймастӑп. Парти программи çинчен калаçнӑ чухне эсир çав ыйту патне таврӑнӑр-ха,—ун чухне вара эсир капитализма панӑ характеристикӑна илтӗр. Çав общество крепостной йӗркене хирӗç, кивӗ крепостной правӑна хирӗç ирӗклӗх лозунгӗпе тухнӑ. Анчах çав ирӗклӗх, харпӑрлӑх тытса тӑраканшӑн пулнӑ. Крепостной правӑна аркатса тӑксан вара,—вӑл XVIII-мӗш ӗмӗр вӗçӗнче тата XIX-мӗш ӗмӗр пуçламӑшӗнче пулса иртнӗ,—Российӑра

вăл ытти çĕршывсенчен кайрантарах, 1861-мĕш çулта, пулса иртнĕ,—ун чухне крепостной государство вырăнне капитализмлă государство пулса тăнă. Çав государство, пирĕн лозунг пĕтĕм халăх ирĕклĕхĕ пулса тăрать тесе пĕлтерет, вăл пĕтĕм халăх ирĕкне палăртать, тет, хăй класлă государство пулнине йышăнмасть, вара çакăнта пĕтĕм халăх ирĕкĕшĕн кĕрешекен социалистсемпе капитализмлă государство хушшинче кĕрешӳ ӳссе пырать, çав кĕрешӳ халĕ Советлă социализмлă республика туса хурасси патне илсе пычĕ,—вăл кĕрешӳ пĕтĕм тĕнчене çавăрса илчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери капитала хирĕç пуçланă кĕрешĕве ăнланас тесен, капитализмлă государство ăшчиккине ăнланас тесен, çакна асра тытмалла: капитализмлă государство крепостной государствăна хирĕç тăрса, кĕрешĕве ирĕклĕх лозунгĕпе кайнă. Крепостной правăна пăрахăç туни вăл—капитализмлă государство представителĕсемшĕн ирĕклĕх панине пĕлтернĕ тата вĕсене пулăшу пană, мĕншĕн тесен крепостной право арканса пынă, хресченсем вара выкуп йĕркипе илнĕ çĕре, е помещике куланай тӳлесе тăракан çĕрĕн пĕр пайне, пĕтĕмĕшпех хăйсен харпăрлăхĕ пек тытса тăма май илнĕ,—государство çаксем çине çавăрăнса пăхман: çав харпăрлăх кирек мĕнле пуçланса кайнă пулин те, вăл ăна хӳтĕленĕ, мĕншĕн тесен çак государство уйрăм харпăрлăх çинче тытăнса тăнă. Кучухнехи мĕнпур цивилизацилле государствăсенче те хресченсем уйрăм харпăрлăх тытса тăракансем пулса пынă. Государство уйрăм харпăрлăха хӳтĕлесе тăнă, вара помещик хăйĕн çĕрĕн пĕр пайне хресчене парсан, государство помещике выкуп урлă, çĕре укçан сутни урлă усă парса тăнă. Государство çапла пĕлтернĕ пек: тулли уйрăм харпăрлăха эпир хӳтĕлесе хăварăпăр, тенĕ пек пулнă,—çавăнпа та ăна пур майсемпе те пулăшнă тата хута кĕнĕ. Государство çав харпăрлăха кашни купец, промышленник, фабрикант тытса тăма пултарнине йышăннă. Çав общество, уйрăм харпăрлăх çинче, капитал влаçĕ çинче, мĕнпур пурлăхсăр рабочисемпе ĕççынни хресчен массисене пĕтĕмĕшпех пăхăнтарса пурăнни çинче тытăнса тăракан общество,—çав общество вара хăйне, эпĕ ирĕклĕхе пула пуçпулса тăратăп, тесе пĕлтернĕ. Крепостной правăна хирĕç кĕрешсе,—харпăрлăх вăл ирĕклĕ тесе пĕлтернĕ, халĕ государство класлă государство пулма пăрахрĕ, тесе уйрăмăнах мухтаннă.

Çав вăхăтрах, государство малтанхи пекех, чухăн хресченсемпе рабочи класа капиталистсен аллинче тытса пăхăнтарса тăма пулăшакан машина пулнипех юлнă, анчах тулашран пăхсан вăл ирĕклĕ пулнă. Вăл пурне те тивĕç суйлав прави çинчен пĕлтерет, хăйсене пулăшакансен, ученăйсемпе философсен чĕлхипе каласа, вăл государство класлă государство мар, тет. Халĕ те, çав государствăна хирĕç Советлă социализмлă республикăсем кĕрешме пуçласан та, вĕсем пире эсир ирĕклĕхе пăсатăр, вăйпа ирĕксĕрлесси çинче, пĕри тeприне пусарса тăрасси çинче тытăнса тăракан государство тăватăр, тесе айăпласçĕ, вĕсен государстви вара—пĕтĕм халăхлă, демократиллĕ государство пулать, имĕш. Акă çак ыйту—государство ыйтăвĕ—халĕ, социализмлă революци пĕтĕм тĕнчипех пуçланнă вăхăтра, шăпах ĕнтĕ хăшпĕр çĕршывсенче революци çĕнтернĕ вăхăтра, пĕтĕм тĕнчери капитала хирĕç кĕрешесси уйрăмах çивĕчленсе кайнă вăхăтра,—государство ыйтăвĕ питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ, калас пулать, чи кирлĕ ыйту, кучухнехи мĕнпур политикăллă ыйтусен, мĕнпур политикăллă тавлашусен фокусĕ пулса тăчĕ.

Российăра е кирек те хăш цивилизациллĕ çĕршывра, кирек те мĕнле партие илсен те,—мĕнпур политикăллă тавлашусем, уйрăлса кайнисем, шухăшсем халĕ государство ыйтуне мĕнле ăнланасси тавра пулса пыраççĕ. Капитализмлă çĕршывра, демократиллĕ республикăра,—уйрăмăнах Швейцария е Америка пек,—чи ирĕклĕ демократиллĕ республикăсенче, государство халăх ĕмĕт-кăмăлне палăртаканни т. ыт. пулса тăрать-и, е государство вăл унти капиталистсем рабочи класпа хресченсене хăйсен влаçĕнче тытса тăма кирлĕ машина пулса тăрать-и? Ку вăл тĕп ыйту, ун тавра халĕ пĕтĕм тĕнчери политикăллă тавлашусем пулса пыраççĕ. Большевизм çинчен мĕн калаççĕ? Буржуази пичечĕ большевиксене вăрçать. Большевиксем—вĕсем халăх влаçне пăсакансем пулса тăраççĕ тесе, большевиксене хирĕç сарăлнă айăпа каламан хаçата эсир пĕрре те тупаймăр. Пирĕн меньшевиксемпе социалист-революционерсем хăйсен айванлăхĕ пирки (тен, айванлăх пирки мар, е çав айванлăх, тен, ун çинчен—вăл вăрă ĕçĕ тунинчен те начартарах пулать, тесе каланă пек айванлăх та пулать пулĕ) большевиксем вĕсем ирĕклĕхпе халăх влаçне пăсакансем пулса тăраççĕ, тесе большевиксене хирĕç сарнă айăпа шухăшласа кăларакансем

эпир пулатпăр, теççĕ пулсан, вара вĕсем питех те кулăшла аташаççĕ. Хальхи вăхăтра пит те пуян çĕршывсенчи пит те пуян хаçатсенчен, çав хаçатсене сарма вуншар миллион тенкĕ тăкак туса, вуншар миллион экземплярта буржуаллă ултав тата империалистла политика сарса тăман хаçат пĕрре те çук,—çав хаçатсенчен большевизма хирĕс сарнă айăпсене çак тĕп сăлтавпа: Америка, Англия, Швейцария малта пыракан государствăсем, халăх влаçĕ çинче тытăнса тăракан государствăсем пулаççĕ, большевикла республика вара—вăрă-хурахсен государстви, унта ирĕклĕх çук, большевиксем халăх влаçĕ идейине пăсакансем, вĕсем учредилкăна та хăваласа ячĕç, тесе каламан хаçат пĕрре те çук. Большевиксене çапла ирсĕр айăпласа пĕтĕм тĕнчипех темиçе хут та калаççĕ. Çапла айăпланисем пире пĕтĕмĕшпех çакăн пек ыйту: мĕн вăл государство? текен ыйту патне илсе пыраççĕ. Çавăн пек айăпласа çырнисене ăнланса илес тесен, вĕсем çине тивĕçлипех ăнлануллăн пăхас тесен, илтни тăрăх анчах мар, шухăшпа тавçăрса илес тесен, государство мĕн иккенне уççăн ăнланмалла. Эпир кунта капитализмлă тĕрлĕ государствăсем пуррине тата вĕсене сыхлама вăрçăччен туса тултарнă вĕрентӳсене куратпăр. Ыйтăва тĕрĕс татса парас тесен, çав мĕнпур вĕрентӳсемпе шухăшсем çине критикăллă пăхас пулать.

Сире пулăшма Энгельсăн «Происхождение семьи, частной собственности и государства“ ятлă сочиненийĕ çинчен эпĕ каларăм ĕнтĕ. Кунта шăпах акă мĕн çинчен каланă: кирек мĕнле государство та, унта çĕр тĕлĕшпе, производство хатĕрĕсем тĕлĕшпе уйрăм харпăрлăх пур пулсан, капитал пуçпулса тăрать пулсан, вăл темле демократиллĕ пулин те, вăл капитализмлă государство пулса тăрать, вăл капиталистсен аллинче рабочи класа тата чухăн хресченсене пăхăнтарса тăмалли машина пулса тăрать. Пурне те тивĕç суйлав прави, Учредительнăй Собрани, парламент—çаксем ĕнтĕ форма çеç, хăйне майлă вексель, вăл чăннипе илсен, ĕçе ним чухлĕ те улăштармасть.

Государство пуçпулса тăнин форми тĕрлĕрен пулма пултарать: ăçта пĕр йышши форма пур, унта капитал хăйĕн вăйне пĕр майлă палăртать, ăçта тепĕр йышши форма пур—унта тепĕр майлă палăртать, анчах, чăннипе илсен, власть капитал аллинчех юлать: ценз прави е урăххи

пур-и, демократиллĕ республика пур-и—вăл пурпĕрех, тата вăл мĕн чухлĕ демократиллĕрех, капитализм пуçпулса тăрасси çавăн чухлĕ ирсĕртерех, намăссăртарах. Тĕнчере чи демократиллĕ республикăсенчен пĕри—Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем—анчах çак çĕршыври пек (кам унта 1905 ç. хыççăн пулса курнă, вăл ун çинчен пĕлет пулĕ), пĕтĕм общество çийĕнче капитал влаçĕ, пĕр пĕчĕк ушкăн миллиардерсен влаçĕ ниçта та, Америкăри пек, киревсĕр, уççăнах сутăнчăклă пулни палăрмасть. Капитал,—вăл пур пулсан,—пĕтĕм общество çийĕнче пуçпулса тăрать, вара нимле демократиллĕ республика та, нимле суйлав прави те ĕçĕн ăшчиккине улăштармасть.

Демократиллĕ республика тата пӳрне те тивĕç суйлав прави крепостничество стройĕпе танлаштарсан питех те пысăк прогресс пулнă: вĕсем пролетариата пĕрлешме, пĕтĕçме, капитала хирĕç пĕрмаях кĕрешсе пыракан йĕрkeллĕ, дисциплинăллă ретсем тума май панă. Чурасем çинчен каласан та ĕнтĕ, крепостной хресченĕн ун пекки патне çывăхараканни те, нимĕн те пулман. Эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ, чурасем восстанисем, пăлхавсем тунă, граждан вăрçисем пуçласа янă, анчах ăнланулă нумайрахăш тума, кĕрешӳре ертсе пыракан партисене тума нихăçан та пултарайман, мĕнле тĕллев патне кайнине уççăн ăнланма пултарайман, вĕсем историри чи революциллĕ самантсенче те пуçпулса тăракан классен аллинче яланах пешкăсем çеç пулса юлнă. Буржуаллă республика, парламент, пурне те тивĕç суйлав прави,—çаксем пурте обществăн пĕтĕм тĕнчери аталанăвĕ енчен илсе пăхсан, питех те пысăк прогресс пулса тăраççĕ. Этемлĕх капитализм патнелле пынă, капитализм çеç, хула культурине пула, пролетарисен пусмăрти класне хăйĕн вырăнне ăнланса илме тата пĕтĕм тĕнчери рабочи движенине туса яма, халĕ пĕтĕм тĕнчипех партисене организациленнĕ миллионшар рабочисене хатĕрлеме,—массăсен кĕрешӳне ăнланулăн ертсе пыракан социалистла партисем тума май пачĕ. Парламентаризмсăр, суйлавсемсĕр рабочи класăн çав аталанăвĕ пулма та пултарайман пулĕччĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ çаксем пурте халăхăн сарлака массисен куçĕ умĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕç. Акă мĕншĕн ĕнтĕ улшăну питех те йывăр пек туйăнать. Государство ирĕклĕ тата вăл пурин интересĕсене те хӳтĕлеме тивĕçлĕ текен буржуаллă суяна ăн-

лануллӑ икӗпитлӗ çынсем, ученăйсем, пупсем çеç мар пулăшса хӳтĕлесе тăраççĕ, тата ытти çынсем те, кивĕ тĕшмĕшлĕхсене кăмăлпах çĕнĕрен туса пыракансем, кивĕ капитализмлă обществăран социализма куçассине ăнланма пултарайманнисем те нумайĕшĕ хӳтĕлеççĕ. Буржуазие тӳррĕмĕнех пăхăнса тăракан çынсем çеç мар, капитал пусмăрĕ айĕнче пурăнакан е çав капитала сутăннă çынсем çеç мар (капитал патĕнче службăра тĕрлĕ ученăйсем, художниксем, пупсем т. ыт. пит нумай тăраççĕ), тата буржуаллă ирĕклĕх тĕшмĕшлĕхĕн влиянийĕнче тăракан çынсем те, çаксем пурте большевизма хирĕç пĕтĕм тĕнчипех тапăнчĕç. Вĕсем ăна хирĕç çакăн пирки тухрĕç: Совет республики хăй пуçланса кайнă чух буржуаллă суяна сирсе пăрахрĕ те уççăнах çапла пĕлтерчĕ—эсир хăвăрăн государствăна ирĕклĕ государство тетĕр, анчах та, чăннипе, уйрăм харпăрлăх пур чухне, сирĕн государство вăл, демократиллĕ республика пулсан та, капиталистсен аллинче рабочисене пусармалли машина пулса тăрать, вара, государство мĕн чухлĕ ирĕклĕрех, вăл çавăн чухлĕ уççăнрах палăрать. Ăна кăтартакан тĕслĕх—Европăра Швейцария, Америкăра—Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пулса тăраççĕ. Шăпах ĕнтĕ çав çĕршывсенчи пек, вĕсем демократиллĕ республикăсем пулин те, вĕсене тем пекех хитре сăрласа кăтартаççĕ пулин те, ĕçлĕх демократийĕ çинчен, граждансен пĕртанлăхĕ çинчен темле сăмахсем калаççĕ пулин те, капитал урăх ниçта та çавтери намăссăрăн тата пĕр хĕрхенмесĕр пуçпулса тăмасть, вăл çавăн пек уççăн урăх ниçта та курăнса тăмасть. Чăннипе илсен, Швейцарипе Америкăра капитал пуçпулса тăрать, вăл вара рабочисем хăйсен пурнăçне мĕн чухлĕ те пулин лайăхлатма тăрăшнине хирĕç çавăнтах граждан вăрçипе тухать. Çав çĕршывсенче салтаксем, яланхи войско сахалрах,—Швейцарире милици пур, кашни швейцарецăн хăйĕн килĕнче пăшал пур, Америкăра юлашки вăхăтченех ĕнтĕ яланхи войско пулман — çавăнпа та стачка пулсан, буржуази хĕçпăшалланать, салтаксене тара тытать те стачкăна пусарать, рабочи движение пусарасси Швейцарипе Америкăри пек тискер хаярлăхпа урăх ниçта та пулса иртмест, парламентра капитал влиянийĕ çавăнти пек урăх ниçта та палăрмасть. Капитал вăйĕ—пурте, биржа—пурте пулса тăрать, парламент, суйлавсем, вĕсем вара марионеткăсем, пуканесем...

Анчах та вăхăт мĕн чухлĕ ытларах иртет, рабочисен ку-çĕсем çавăн чухлĕ ытларах уçăлаççĕ, Совет влаçĕн идейи уйрăмăнах эпир халĕ çеç пурăнса ирттернĕ юнлă ça-пăçу хыççăн çавăн чухлĕ анлăрах сарăлса пырать. Капиталистсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешме кирли рабочи класшăн уççăнрах та уççăнрах паллă пулса пырать.

Республика темĕнле формăсемпе витĕнсе тăрсан та, антив вăл чи демократиллĕ республика пултăр, анчах вăл буржуаллă республика пулсан, унта çĕр тĕлĕшпе, фабрикăсемпе заводсем тĕлĕшпе уйрăм харпăрлăх юлнă пулсан, уйрăм капитал пĕтĕм обществăна тара кĕрĕшнĕ чуралăхра тытать пулсан, урăхла каласан, унта пирĕн партин программипе Совет конституцийĕ каласа пĕлтернисене пурнăça кĕртмеççĕ пулсан, вара çав государсто вăл—пĕрисем теприсене пусмăрламалли машина пулса тăрать. Çав машинăна вара эпир капитал влаçне сирпĕтсе антаракан класăн аллине илĕпĕр. Государство вăл пурне те тивĕç пĕртанлăх текен мĕнпур кивĕ тĕшмĕшлĕхсене эпир сирсе ывăтатпăр,—вăлултав: эксплуатаци пур чухне пĕртанлăх пулма пултараймасть. Помещик рабочипе пĕртан, выçă çын—тутă çынпа пĕртан пулма пултаримасть. Государство тесе ят панă машинăна, çынсем ун умĕнчи тĕшмĕшле хисеплесе чарăнса тăраççĕ, вăл пĕтĕм халăх влаçĕ пулать текен кивĕ юмахсене ĕненеççĕ,—çав машинăна пролетариат сирсе пăрахать те, çапла калать: çакă вăл—буржуаллă ултав, тет. Эпир çав машинăна капиталистсенчен туртса илтĕмĕр, ăна хамăр алла илтĕмĕр. Çав машинăпа е чукмарпа эпир кирек мĕнле эксплуатацине те аркатса тăкăпăр, вара çĕр çинче эксплуатацилеме май юлмасан, çĕр хуçисем, фабрика хуçисем юлмасан, пĕрисем ытлашши тăраннипе алхасса пурăнасси, теприсем выçă ларасси пулмасан,—çавăн чухне çеç, çавна валли майсем юлмасан, эпир çав машинăна пăрахăçа кăларăпăр. Ун чухне государство пулмĕ, эксплуатаци пулмĕ. Акă пирĕн коммунистсен партин шухăшĕ. Эпир тепĕр лекцисенче çак ыйту патне таврăнасса,—тата пĕр хут çеç мар таврăнасса шанатăп эпĕ.

Июль 1919 ç. *Соч., т. I XXIV, стр. 362—377*

ПРОВЕРЩИЦА № 3
Просим при обнаружении дефекта в данной книге прислать ее для обмена с приложением этого талона—г. Чебоксары, Дом Печати, ул. Володарского, 5. Типография № 1 Управл. издательств и полиграфии.
*Заводоуправление*

Редактор перевода **Г. Молостовкин**

Подписано к печати 10/V—41. НТ 3452 Печатных листов 1,5. Заказ №240
Тираж 2.500 экз.

Отпечатано в типографии №1 Управления изд. и полигр. при СНК ЧАССР,
г. Чебоксары. Володарского, 5.

Цена 20 коп.

В. И. ЛЕНИН
О ГОСУДАРСТВЕ
На чувашском языке
Госиздат ЧАСС
1941